*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

69 (2582) [1]
Хакĕ ирĕклĕ

# ХРЕСЧЕН САССИ

2015
çӳк
27

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕ КУН

# Ӳсĕм шута илме ыйтатать





Сăнӳкерчĕксене www.cap.ru сайтран илнĕ

**Чăвашстат кăтартăвĕ тăрăх – кăçалхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри мĕнпур йышши хуçалăхра пирвайхи виçепе 575,6 пин тонна тырă тĕшĕлененĕ (гектартан тухнă тухăç – 19,9 центнер), 703,3 пин тонна çĕрулми (206 центнер), 116,1 пин тонна пахчаçимĕç пуçтарса илнĕ. Республикăн ял хуçалăх министрĕн çумĕ Николай Якимов асăннă тăрăх – Улатăр тата Шупашкар районĕсенче хальхи вăхăтра 797 гектар çинче хĕвел çаврăнăш тата 30 гектар çинче вăрлăхлăх куккурус вырса пĕтермен. Кун çинчен вăл кăçалхи тухăç кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ канашлура каланă. Унта яланхиллех районсен тĕп агрономĕсем, ăсчахсем, ял хуçалăхĕпе тачă çыхăнса ĕçлекен ведомствăсен специалисчĕсем хутшăннă.**

## ТУХĂÇЛĂХ – СОРТРА

Юлашки çулсемпе танлаштарсан кăçал пуçтарса кĕртнĕ пĕтĕмĕшле тухăç виçи ӳснĕ. Çакă акмалли-лартмалли лаптăка пысăклатнипе те çыхăннă-тăр. Вăл 573,7 пин гектарпа (пĕлтĕрхи шайăн 102,7 %) танлашнă.

Çĕре минерал удобренийĕпе апатлантармасăр, ял хуçалăх культурисен сортне çĕнетмесĕр пуян тухăç илеймĕн. Иртнĕ çур аки тĕлне удобрени питĕ хакланнине кура-ши чылай район ăна пĕлтĕрхинчен сахалрах хывнă. Кашни гектара мĕн чухлĕ тивнине шута илсен уйрăмах Хĕрлĕ Чутайсен (134 процент), Вăрмарсен (125), Красноармейскисен (122), Сĕнтĕрвăррисен (114) Куславккасен (111), Елчĕксен (104), Çĕрпӳсен (102) кăтартăвĕ пысăк. Ыттисен иртнĕ çулхи шая çитеймен.

Пĕтĕм республикăпа илсен минерал удобренийĕ кашни гектар пуçне кăçал 25,74 кг лекнĕ. Çĕрпӳ (40,69 кг), Вăрнар (38,94), Красноармейски (37,49), Комсомольски (35,22), Куславкка (33), Сĕнтĕрвăрри (30,07), Елчĕк (29,94), Патăрьел (27,33) районĕсем республикăн вăтам кăтартăвĕнчен самай иртнерĕ.

Тухăç кĕтнĕ вăхăтра хресчен ытларах чухне çанталăка пуç çапать. Лешĕ пĕр çул ăнтарать, тепринче илтмесен те пултарать. Çавăнпа çĕр çынни кашни çулах типĕ çанталăка парăнман сортсем шырама тăрăшать. Республикăра патшалăха пăхăнса тăракан, сорт тĕрĕслекен тăватă участок шутланать. Вĕсем Шупашкар, Вăрнар, Улатăр, Комсомольски районĕсенче вырнаçнă. Кĕрхи культурăсем çурхисенчен самай тухăçлă пулнине палăртаççĕ ертӳçĕсем. Ятарлă участоксенче ӳстернĕ кĕрхи тулăн 15 сортĕнчен кăçал "Волжская 100" текенни пысăк тухăç панă (гектартан 22,4 центнер). Кашни сортăн кăтартăвне "Безенчукская 380" (гектартан 20,1 ц) йышшипе танлаштарнă. Çавăн пекех "Безенчукская 616" (вăтамран 22,2 ц), "Скипетр" (20,8), "Илот", "Италмас" (20,3) сортсем япăх мар çитĕннĕ.

"Безенчукская 87" кĕрхи ыраш кашни гектартан вăтамран 28,8 центнер тухнă. "Парча", "Графиня", "Янтарная", "Новая эра" ятлисем те стандарт вырăнне йышăннă "Кировская 89" сорт тухăçĕнчен иртнерĕ. Çавах та çитес çул специалистсем республикăра кĕрхи ырашăн "Грань" сортне акма сĕнеççĕ.

Çурхи тулăн "Йолдыз" сорчĕ те вĕсен шухăшĕпе Чăваш Ене пуян тухăç кӳмелле. Кăçал тĕрĕслев лаптăкĕсенче ăна гектартан вăтамран 32,1 центнер вырса илнĕ. Танлаштаруллă "Симбирцит" (29,2 ц) сортран тухăç тĕлĕшĕпе çавăн пекех "Тулайковская надежда" (30), "Ульяновская 105" (31,8), "Ульяновская 101" (30,1), "Омская 36" (31,2), "Ингала" (32,2), "Архат" (32,1) йышшисем ăннă.

"Удача" сорт (гектартан 195 ц) ир пулакан çĕрулми шутланать. Унпа танлаштарсан тĕрĕслев участокĕсенчи "иккĕмĕш çăкăрăн" ытти сорчĕсенчен "Кристель" (312 ц), "Сандрин" (308), "Регги" (268) палăрнă. Вăтам ирхисене "Невский" (136) ятлипе танлаштарнă. Ку йышра "Дамарис" (350), "Гала" (317), "Капризе" (312) тата ыттисем те çӳлерех асăннă сортран тухăçа нумай ӳстернĕ.

Килти хушма хуçалăхра ял çынни вăтам вăхăтра е каярах пулса çитекен çĕрулмине те лартма тăрăшать. Сорт участокĕсенче кун пеккисенчен "Гусар" (377 ц), "Бернина" (354), "Майдера" (321), "Медисон" (238) ăнса пулнă. Кая юлса чăмăртанаканнисенчен "Воларе" (369) сорта палăртмалла.

"Невский" сорта ытларах чухне "Манифестпа" танлаштарма пăхаççĕ. Юлашки виçĕ çул кăтартăвне хаклас пулсан "Манифест" тухăçлăхпа палăрмаллах уйрăлса тăрать. Ăна гектартан вăтамран 410 центнер пуçтарса илнĕ. Çав хушăра "Невский" сортăн кăтартăвĕ – 170 центнер.

Пахчаçимĕçрен çитес çул хресченсене хăяран – "Фуга F1", купăстан – "Агрессор F1", кишĕрĕн "Рафинад" сорчĕсемпе усă курма сĕнеççĕ. "Казанская 285" кĕрхи тулла, "Прохоровка" çурхи тулла, "Чулпан", "Пурга", "Вятка 2" кĕрхи ыраша, "Скакун" сĕлле, Орловчанин" пăрçана акма хушмаççĕ.

## УСĂСĂР АН ВЫРТТĂР

Кăçал хуçалăхсем кĕрхисене акса пĕтернĕ ĕнтĕ. Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç, Улатăр, Элĕк, Пăрачкав, Елчĕк районĕсем ку тĕлĕшпе плана пурнăçланă, ыттисем – çук. Республикăпа илсен пĕтĕмпе 82392 гектар акса хăварнă, ку вăл – палăртнин 82,4 проценчĕ.

Хальччен усă курман çĕре пусă çаврăнăшне кĕртессипе те уйрăм районсен пайтах ĕçлемелле. Тĕслĕхрен, Улатăрсен. Унта кунашкал лаптăк çулталăк пуçламăшĕнче 12243 гектарпа танлашнă. 4 пин ытла гектар çинче акса хăварнă. Усă курман çĕр çавăн пекех Элĕк (6781 гектар), Канаш (5058), Хĕрлĕ Чутай (5096), Шупашкар (5053), Çĕмĕрле (2342), Сĕнтĕрвăрри (1919), Етĕрне (1053), Муркаш (779), Куславкка (566), Йĕпреç (554) районĕсенче чылай пулнă. Патăрьел, Вăрнар, Комсомольски, Шăмăршă, Елчĕк тăрăхĕсенче пĕр гектара та сая яман.

Анчах савăнма иртерех-мĕн. Кăçал пушă выртакан лаптăксене çавах та Вăрнар районĕнче тупса палăртнă. Вĕсем 2751 гектарпа танлашнă. Кун пек хушма çĕрсене Шупашкар (1397 гектар), Çĕмĕрле (505), Çĕрпӳ (530), Вăрмар (404), Йĕпреç (359), Куславкка (352), Красноармейски (88) тата Пăрачкав (3) районĕсенче те тупнă. Республикăпа илсен 6388 гектар çĕрпе усă курманнине тăрă шыв çине кăларнă.

**Ирина НИКИТИНА.**

## Ял çыннине пулăшма

Яллă территорисене аталантарассипе çыхăннă федерацин тĕллевлĕ программипе усă курса çĕршер çын пурăнмалли условисене лайăхлатать. Кăçалхи çур çулта кăна Чăваш Енре 179 ял çынни алла ятарлă свидетельствăсем илнĕ, çав шутра – 121 çамрăк çемьепе специалист. Республикăн кашни районĕнче пурăнаканах ялта е çĕнĕ çурт хăпартнă, е хваттер туяннă.

Программăна хутшăнса кăçал патшалăхран тавăрса памалла мар укçа илнисен 60 проценчĕ агропромышленноç тытăмĕнче вăй хурать, çамрăк çемьесемпе специалистсен 54 проценчĕ те çак сферăра тăрăшать.

Вĕсене пулăшма пĕтĕмпе 124,38 млн тенкĕ уйăрнă, ку шутран федераци бюджетĕнчен – 87,07 млн тенкĕ, республика хыснинчен – 37,31 млн тенкĕ.

## Саккуна çĕнетесшĕн

Чăваш Республикинчи ĕç ветеранĕсем çинчен калакан саккун проектне пăхса тухса ырланă. Ĕçлев тата социаллă хӳтлĕх министрĕ Сергей Димитриев пĕлтернĕ тăрăх – документа хатĕрлеме РФ Президенчĕ 2014-2016 çулсенчи бюджет политикине йĕркелеме хушнине тĕпе хурса хатĕрленĕ. Унпа килĕшӳллĕн социаллă пулăшăва ытларах нуша куракансен тивĕçмелле, вăл адреслă пулмалла.

Аса илтерер, 37 çул та 6 уйăхран сахал мар ĕçленĕ хĕрарăмсене тата 42 çул та 6 уйăхран кая мар ĕç стажĕ пур арçынсене "Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ" ят пама йышăннă. Хальхи саккун проекчĕпе ăна илме малтанхи критерисем çумне çаксене хушма сĕнеççĕ: стажăн 50 проценчĕ Чăваш Республикипе çыхăнмалла, унсăр пуçне хăй вăхăтĕнче тӳр кăмăлпа вăй хуманшăн (ӳсĕр çӳренĕшĕн, вăрланăшăн, ĕçе тухманшăн, тивĕçе пурнăçламаншăн тата ыт.те) ĕçрен кăларнине шута илесшĕн. Министр палăртнă тăрăх – кун пирки ыйтса çыракан нумай пулнă, пĕтĕмпе 120 çыру ытла килнĕ.

**РАÇÇЕЙ ПОЧТИН КАШНИ УЙРĂМĔНЧЕ «ХЫПАРПА» УНĂН КĂЛАРĂМĔСЕНЕ**

РАШТАВ 03 ЙӲНĔ ХАКПА ÇЫРĂНТАРАÇÇĔ РАШТАВ 12

**Мĕн калаçтарать?**

# Хамăра хӳтĕлеме вĕренер

Ӳркенекен, кахал-наян кăна кунĕ-кунĕпе килте алă усса ларма пултарать теççĕ пулин те хальхи тапхăрта ĕçе вырнаçма пачах çăмăл мар. Çавăнпа яшкĕрĕмпе хĕр-упраçăн ертӳçĕ сĕнекен ĕç условийĕсемпе ирĕксĕрех килĕшме тивет. Лешĕ хуçа пулнăран ниме те пăхмасть – шалăвăн пĕр пайне саккуна пăсса, урăхла каласан, конвертпа парасси çинчен те шахвăртать. Ĕçлекеншĕн мĕн паха? Алăра укçа пулни. Вăрттăн тӳлеççĕ-и ăна е саккун ыйтнă пек-и – чылайăшне çакă пăшăрхантармасть. Çапла вăл шалăвăн чи пĕчĕк виçине официаллă майпа илет, ыттине – ытларах пайне – конвертпа. Пуçлăхшăн çакă меллĕ – налук сахал тӳлет. Чăннипе вара ĕçлекенĕн çулне нумай енчен пӳлет. Пĕтĕмĕшле ĕç укçине официаллă кăтартнă (ĕç килĕшĕвĕн документĕнче) пулсан унăн малашлăхри пенсийĕ те пысăк пулĕччĕ, чирлесен, ĕçсĕр юлсан е пĕчĕк ачапа ларнăшăн паракан пособисене те ытларах илĕччĕ.

Ку çеç-и? Хваттер туянас, укçалла вĕренес тата пульницара сипленес пулсан та патшалăх çăмăллăхĕпе усă курса НДФЛ налукне каялла таврăймасть. Банкра кредитпа тивĕçтермесен те пултараççĕ, лавккара та килĕшнĕ тавара кредит майĕпе туянаймасть тата ытти те.

Ял хуçалăхĕнче тăрăшакансен шалăвĕ пĕчĕккине пытармалла мар. Тĕслĕхрен, Чăвашстат кăтартăвĕ тăрăх – кăçалхи тăхăр уйăхра çак тытăмра тата сунарпа вăрман хуçалăхĕнче вăй хуракансен уйăхри вăтам ĕç укçи 14332 тенкĕ пулнă. Вăл пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен кăшт пысăкрах (112,9 процент), анчах республикăн экономикинчи вăтам ĕç укçин виçин 68,8 проценчĕпе кăна танлашнă. Çав вăхăтра Чăваш Енри пĕтĕмĕшле ӳсĕм шайĕ 102,6 процента çитнĕ.

Аталанма май ытларах пултăр тесеши, уйрăмах фермерсем ĕçлекенсен шалăвне туллин кăтартасшăн мар, налук тӳлемелли суммăна чакарасшăн. Теприсем саккун ыйтнă пек çынпа ĕç килĕшĕвĕ туса ăна алă пусса çирĕплетесшĕн мар. Хуçалăх капла малалла кайĕ-и е çук-и – кăна вăхăт кăтартĕ. Анчах ертӳçĕ ĕçлекене пĕр кунпа çеç пурăнтарни куçкĕрет. Ăна ĕçченĕн шăпи сахал шухăшлаттарать.

Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕн пай пуçлăхĕ Байрха Арманова кăçалхи 9 уйăхра страхлав взносĕ тӳленисен отчечĕсене тишкернĕ хыççăн çакна палăртнă: республикăри 59 предприятире уйăхри вăтам шалу чи пĕчĕк ĕç укçинчен те иртмест. Кунашкал суммăран страхлав взносĕ те сахал тӳленет, çавна май çыннăн пенсийĕ те пĕчĕк пулать.

Тĕрлĕ хаклав тăрăх – çĕршывра "вăрттăн" ĕç укçин сумми 40 процентран пысăк. Кун çинчен патшалăх шайĕнче уççăнах калаççĕ, ыйтăва татса пама майсем шыраççĕ.

Хамăр республикăра ку тĕлĕшпе ведомствăсемпе çыхăнса ĕçлекен комисси йĕркеленĕ. Унта налук инспекцийĕн, Пенси фончĕн, ĕç инспекцийĕн, право хуралĕн представителĕсем кĕнĕ. Анчах ĕç укçи тытăмĕнче йĕрке тума çакă та çителĕксĕр. Хăйĕн правине пăснине асăрхасан çыннăн çакăн çинчен яваплă органа пĕлтермелле. Ку тĕрĕслевçĕсен ĕçне те çăмăллатать, капла гражданин хăйне те хӳтĕлет. Ертӳçĕ ĕç правине пăснă тĕслĕхсем çинчен налук службине, прокуратурăна, ĕç инспекцине тата ытти органсене "хĕрӳ линин" телефонĕсемпе шăнкăравласа пĕлтермелле. Пенси фончĕн республикăри уйрăмне 4-08-75 номерпе тухма пулать.




Пуçлăхсем ĕçлекенсемпе саккун ыйтнă пек килĕшӳ тунине республикăра вырăнсене тухсах тĕрĕслеççĕ. Ĕçлев тата социаллă хӳтлĕх министрĕ Сергей Димитриев палăртнă тăрăх – кăçалхи чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕ тĕлне ĕç килĕшĕвĕсĕр тăрăшнă 8864 çынна тупса палăртнă. Тĕрĕслевсем 3517 çынна саккун хушнă пек ĕçлеме май туса панă. Çавăнпа йĕркене пăсни çинчен каламалла, пĕлтермелле, шарламасăр тăмалла мар.

**Ирина НИКИТИНА.**

# Ĕç пур, ĕçлекен çук

**"Йăлăхса çитрĕм ĕнтĕ "кризис", инфляци" сăмахсене итлесе. Телевизорпа та, радиопа та пĕр вĕçĕмсĕр янăраççĕ вĕсем", – тарăхнипе Митрахван мучи радиоприемника розеткăран карт кăна туртса кăларчĕ. Унтан ятлаçаятлаçах хăй пекех "ватăлнă" кивĕ фуфайкине хулпуççинчен уртса ячĕ теваскасах тулалла тухрĕ. Тарăхнă вăхăтра упăшкине сăмах хушма юраманнине аван чухлакан Матрунь кухньăна вăркăнчĕ.**

Аллă çул ытла пĕрле пурăнаççĕ вĕсем, виçĕ ача пăхса ӳстернĕ. Кил хуçин аллисем ылтăнах çав: хăйĕн ĕмĕрĕнче икĕ çурт хăпартнă. Вăл тума пĕлмен ĕç, çĕрӳле курман техника çук пулĕ. Тимĕрçе, электрике, сварщике, платнике те пултарать. Хăйĕн пурнăçĕнче миçе пин гектар суха туман-ши? Уй-хирти мĕн чухлĕ тырра вырса пуçтарман-ши?..

Ĕçре пиçĕхсе ватăлнă çын хальхи çамрăксем урам тăрăх çапкаланса çӳренине курсан хытах тарăхать. Паянхи ăру кил-çурт çавăрса çемье чăмăртас шухăшпа пуçне çĕмĕрмест, ĕç вырăнĕ çук тесе кахалланма сăлтав тупать е ăна "сывлăшран" укçа тума вĕренсе пуяс шухăш канăç памасть, е ĕçкĕ-çикĕпе савăнса вăхăта ирттерессине илĕртет. Акă, пĕри Мускавран алăра тытмалăх укçапа килнĕ те эрне ытла ĕнтĕ иртен пуçласа каçчен лавкка умĕнче "ташласа" пурăнать, çăварне карсан выçă пырĕ курăнни çинчен шухăшламасть те. Хĕр-упраçĕ те йăлт улшăнчĕ: тĕрĕ тĕрлеме, чăлха-нуски çыхма çеç мар, ĕне сума та пĕлмест. Пур пек ĕмĕчĕ эстрада юрăçи пулассипе е мода подиумĕ çине тухассипе çыхăннă.

Ирхи тӳперен шурă юр пĕрчи ӳкет те ӳкет. Кĕçех çум курăк айне путнă уй-хире хупласа шуратĕ. Мĕнле-ха капла? Ял çынни ĕç çинчен манчĕ. Ĕлĕкрех çĕр шăнпа витĕнсен кил урлă сысна пусатчĕç пулсан, халĕ урамсенче – шăп-шăпăрт. Хальччен хресчен кризис, инфляци çинчен пĕлмен. Мĕн ачаран ĕçе хăнăхнă, тыр-пул çитĕнтернĕ, пуçтарса илнĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, пахчаçимĕç туса илнĕ, çемье çавăрса ача-пăча ӳстернĕ, ăна тăван çĕршыва юратма, хӳтĕлеме вĕрентнĕ. Никама ăмсанман, ĕçре пиçĕхсе пурнăç шайне хаклама вĕренсе çитнĕ. Мĕншĕн тесен çак çылăхлă тĕнчере этем кун-çулĕ ытла та кĕске, çуркунне илемлĕ çурăлакан чечек пек кăна.

Митрахван мучи шурă юр тăрăх хуллен утнă май сад пахчинчи вĕллесемпе çулçăран тахçанах тасалнă йывăçсене сăнама тытăнчĕ. Савăнтарчĕç вĕсем кăçал, çу питĕ тухăçлă килчĕ. Улма-çырлана, кишĕр-кăшмана ниçта вырнаçтарма çук. 20 килограмран кая мар таякан ылтăн тумлă кавăн та йышлă. Ĕни панулмине те, кишĕрне те хаваспах çирĕ, пăхнă май сĕчĕ-çăвĕпе те савăнтарчĕ. Пăрулас умĕн вăхăт пĕр уйăхран та сахал юлсан аран сума пăрахтарчĕç.

Шел, çĕр паракан пурлăха упраса халăх патне çитерес вырăнне выльăха çитерме тивет. Юрать, ялта сĕт пуçтараççĕ, ытти, хушма хуçалăхра ытлашши юлни, сая каять. Ĕлĕкрех хатĕрлев кантурĕ пурччĕ, унти çынсем чĕртавара ялсем тăрăх тракторпа, машинăпа пуçтарса çӳретчĕç.

Ачалăха аса илетĕн те тĕлĕнетĕн: мĕнле нуша хăваланă хресчене выльăх-чĕрлĕх усрама? Ара, кĕтӳ çӳретме вырăнĕ çук, хĕл каçарма апачĕ çитмест, айне сарма улăм сахал, налук калама çук пысăк... Паян вара ĕç çук тесе нăйкăшатпăр, валеççе панă çĕр çинче ĕçлеме ӳркенетпĕр.

Митрахван мучи утрĕ те утрĕ, шухăша кайса пурнăç мыскарине ниепле хак параймарĕ, çапах тарăхăвне пусарса пӳрте кĕчĕ. "Матрунь! «Кризис» тата «инфляци» тени чăвашла мĕнле куçнине пĕлетĕн-и эсĕ? Мĕнпе хушса çимелли япаласем вĕсем?", – мăкăртатрĕ фуфайкине хывса çакнă май.

**В. КОЖАНОВ.**
**Вăрнар районĕ,**
**Мăньял Хапăс ялĕ.**

# Сăнавра — пĕчĕк тата вăтам бизнес

Росстат пĕчĕк тата вăтам бизнесăн 2015 çулхи ĕç кăтартăвĕсемпе 2016 çулхи пĕрремĕш кварталта федераци статистикин пĕтĕмĕшле сăнавне ирттерессине пĕлтернĕ.

Раççейри 85 регионта, çав шутра Чăваш Енре те пĕтĕмĕшле сăнав иртĕ. Унта пĕчĕк, вăтам, микропредприятисем, уйрăм пайтаçăсем хутшăнаççĕ.

Мероприятин тĕп тĕллевĕ – Раççей экономикинче конкурентлăха ӳстересси, пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталанма çул уçасси.

Пĕтĕмĕшле сăнав кăтартăвĕсем пĕчĕк тата вăтам бизнесри ларутăрăва, вăй-хăвата уçса парĕç. Кăтарту тулли пуласси унта хутшăнакансен хастарлăхĕнчен килет.

Сăнав кăтартăвĕ пĕчĕк тата вăтам бизнесран патшалăх мĕнле пулăшу кĕтнине палăртĕ. Патшалăх та ăна кура вĕсене пулăшмалли майсене анлăлатĕ.

Раççейре пĕтĕмĕшле сăнав юлашки хут 2010 çулта иртнĕ. Чăваш Енре унта 51 пин пĕчĕк тата вăтам предприяти, уйрăм пайтаçăсем хутшăннă.

Çырса тултармалли формăна Росстатăн официаллă сайтĕнче (www.gks.ru) вырнаçтарнă. Вăтам бизнес кăтартусене яланхи йĕркепе, çулсерен паракан отчет формипе тăратма пултарать.

Пĕчĕк тата вăтам бизнеса шута илнĕ чухне çакна тĕпе хураççĕ: вăтам предприятире 250 çын таран ĕçлеме пултарать, пĕчĕккинче – 100, микропредприятире – 15. РФ Правительствин йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн (2015 çулхи утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, 702 [1] ) вĕсем тавар сутса, çăмăллăх парса тумалли тупăш виçине те палăртнă. Вăтам предприятисен çулталăкра – 2 000 млн, пĕчĕкреххисен – 800 млн, микробизнесăн 120 млн тенкĕ. Предприяти-организацин пĕчĕк тата вăтам бизнес секторне лекмелли тĕп критери – устав капиталĕн тытăмĕ. Патшалăх предприятийĕсем пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсен шутне кĕмеççĕ.

Статистикăна бизнес адресĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕ, тупăшĕ, тăкакĕ, тĕп хатĕрĕн хакĕ, йышĕ, тĕп капитала хывакан инвестици виçи, ĕçлекенсен йышĕ, вĕсен шалăвĕ кăсăклантарать. Патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ е тивĕçмен, тивĕçнĕ пулсан пĕчĕк тата ытти ыйтăва хуравлама тивĕ.

Пĕтĕмĕшле сăнава пĕчĕк тата вăтам бизнесăн пурин те хутшăнмалла.

Чăвашстат çав сăнава хутшăнакансен кăтартăвĕсене, вĕсем паракан информацие вăрттăнлăхра тытĕ, налук, ытти патшалăх органĕсене, тĕрĕслекен организацисене памĕ. Сăнавра пуçтарнă информацие отрасль тăрăх – пĕр-пĕр предприятие палăртмасăр пĕтĕмлетĕççĕ. Малтанхи кăтартусем 2016 çулхи декабрьте паллă пулĕç. 2017 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕмĕшле кăтартăва туллин палăртĕç.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**

# Ват тутиллӗ ватлӑх

**Тӗлӗнетӗн Çӗмӗрле районӗнчи Тукас çыннисенчен: ялта лавкка та, клуб та, шкул та, фельдшер пункчӗ те çук. Темиçе çул каялла хытӑ сийлӗ çул пулманран урамра пӗç таран пылчӑк çӑрнӑ. Юрать-ха, пӗр суйлав вӑхӑтӗнче пуçлӑхшӑн суйламастпӑр тесе хӑраткаланӑ хыççӑн яла асфальт сарса панӑ. Куншӑн хӗпӗртет Александр Васильевич Альцев.**



Александрпа Надежда Альцевсем

Хӑй вӑхӑтӗнче Альцевсен кил-çурчӗ ялта чаплӑ пулнӑ-тӑр. Анчах халӗ тахçанхи пуянлӑх çинче чухӑнлӑх "ешерет" тейӗн. Кирпӗч çурт тулаш енчен вырӑн-вырӑнпа çурӑлнӑран шалти стена кӗтесӗсем уйрӑлнӑ, чалӑшнӑ. Тинкерсе пӑхсан – хӑрушӑ, пӳрт халь-халь йӑтӑнса анас пек. "Стена хушшине шлак тултарнӑ, çавӑнпа кӑна кӑшт тытӑнса тӑрать", – тет кил хуçи. 80 çултан иртнӗ ватӑсене çурта пӑсса çӗнетме питӗ йывӑр. Ачисем хулана пурӑнма чӗнеççӗ-мӗн, анчах пахчана, ӗнене мӗнле пӑрахса хӑварӑн? 20 çул тӑрӑшса хатӗрленӗ вутта та сая ярас килмест Альцевсен.

Эпӗ вӗсем патне çитнӗ кун çанталӑк ӑшӑ марччӗ, пӳртре 1-2 сехет калаçса ларнӑ хушӑра самаях шӑнтӑм. 85-ри кил хуçи хӑнк та тумарӗ: инçетрен хӑна килнӗшӗн савӑннипе-ши сивве туймасӑр пӗр чарӑнми чун каниччен калаçрӗ те калаçрӗ. Ӑна итленӗ май эпӗ каллех кил-çурта сӑнарӑм: йӗри-тавра тӗрӗ, вӗсенчен хӑшне-пӗрне тӗрлеме арӑмне упӑшки те пулӑшнӑ. Пуканесене те алӑпа çыхнӑ тата çӗленӗ япаласем тӑхӑнтартнӑ. Тусанран тасатнӑ пулсан вӗсем çиçсе, ялтӑртатса кӑна тӑмалла та... Çук, ку çемьене манӑн хурлас килмест. Ӗçченсем çӗрулмине те хӑйсемех нушаланса кӑларнӑ, ӗне валли апат та хатӗрленӗ, сывлӑхшӑн сиплӗ çырлине те вӑрманта самаях пуçтарнӑ. Тӑтӑш чирлекен ватӑсем (Надежда Васильевна Альцева темиçе операци витӗр тухнӑ) пур ӗçе те ӗлкӗреймеççӗ, вӗсене пулӑшу кирли куçкӗрет. Часах хӗл ларасса шута илсен Альцевсене питӗ хӗрхенес килчӗ. Александр Васильевич вара: "Чунтанах калаçас, каласа кӑтартас, макӑрас та килет",– терӗ те хӑйӗнпе паллаштарма тытӑнчӗ.

Тӗлӗнмелле çыннӑн шӑпи хӑйне евӗрлӗ мар-и? Ӗмӗр тӑршшӗпе электрикре ӗçленӗ. Хутар çывӑхӗнчи пысӑк вольтлӑ подстанцине куççан ӑна вӑйлӑ ток çапнӑ, анчах арçын вилсе чӗрӗлнӗ тейӗн. Тухтӑрсем те кун пек тӗслӗх сайра пулнине пытармаççӗ. Ара, пӗррехинче ток çапнипе тӳрех 5 çын леш тӗнчене ӑсаннине Александр Васильевич хӑй те аван астӑвать. Анчах инкеке лекнӗренпе (25 çул каялла) пуç ыратнипе самаях аптрать.

Çемье выçӑллӑ-тутӑллӑ пурӑннине кура-ши колхоз председателӗ хӗрхенсех çамрӑка Канаша электрике вӗренме янӑ. Тӑранса пурӑнма сӗлӗ çӑнӑхӗ панӑран кӑнтӑрлахи апатра каччӑ ӑна шывпа пӑтратса çинӗ.

Унччен малтан шкулта нумай вӗренме тӳр килмен. 8 класс хыççӑн тифпа чирлени чӑрмантарнӑ. Ялта ӑна пула çав тери нумай çын пурнӑçран уйрӑлнӑ. Вӗсем пыйтӑран тасалайман, çуртра хӑнкӑла, таракан йышлӑ ӗрченӗ. Çамрӑк çав хӑрушлӑхра çӑлӑнса юлнӑ.

Пултарулӑх пулман мар-тӑр çав унра. Салтака кайиччен вӑл ӳкерме юратнӑ. Документ ӑшне çыпӑçтарнӑ пӗчӗк сӑнӳкерчӗксене хут çине куçарнӑ. Çарта художник пуласси çинчен шухӑшламан. Казармӑсене вырнаçсан аслисем çамрӑксем хушшинче ӳкерме пӗлекен çын шырама тытӑннӑ. Апат пӗçерекен, лаша пӑхакан, атӑ саплакан тупнӑ, художник – çук. 2-3 хут та ыйтнӑ салтаксенчен. "Э-эй, эпӗ кунта ӳкерме мар, ать-два утма килнӗ", – шухӑшланӑ хӑй ӑшӗнче Александр. Çавӑнпа пултарулӑхӗ çинчен пӗлтермен. Юлташне вӑл, ахӑртнех, çакӑн çинчен ӑнсӑртран каланӑ. Командир виççӗмӗш хут ыйтсан лешӗ чӑтайман – Альцева пӳрнипе тӗлленӗ.

Пирвайхи ӗçе – "Да здравствует 1 Мая!" тесе çырнине – пуçлӑхсем мӗнле хакласса шикленсе кӗтнӗ. Вӑл вӑхӑтра хальхи пек çилӗм те пулман. Ӑна шӑмӑран хатӗрленӗ, ирӗлтерсе пудрӑна шурӑ сӑрӑпа хутӑштарнӑ. Ӑсталӑха кура-ши чӑваш каччине ӳнерçӗсен ӗççипе паллашма хулана яраççӗ. Кунта Александр ури шуса кайнипе пульницана лекет. Чаçри командирсем хӑйӗн патне çитсен киле ярассинчен те шикленет. Çук, урӑх сӑлтавпа килнӗ иккен. Питӗ яваплӑ ӗç шанаççӗ салтака – Çӗнтерӳ кунӗ тӗлне В. Сталин портретне ӳкермелле. Вӑл пурне те килӗшмелле. Кивӗ ӳкерчӗкрен пӑхса тӑвать ӑна Александр Альцев. Çӗр çывӑрмасӑр тӑрӑшать. Ара, вӑл вӑхӑтра çӗршыв ертӳçин сӑнӗ пӗр-пӗр пуçлӑха кӑмӑла каймасан пӑшалпа персе пӑрахма та пултарнӑ. Турра шӗкӗр, чӑваш каччи тунӑ портрета пурте ырланӑ. Çакӑн хыççӑн тин унӑн чун шикленӗвӗ хыçа юлнӑ.

Паха ӗçшӗн 5 пин тенкӗ укçа парса хавхалантарнӑ ӑна, килне отпуска яма йышӑннӑ. Куншӑн вӑл хӗпӗртенӗ, анчах укçана хӑйӗншӗн кӑна пӗтерме килӗшмен. Унпа вӑл канӑва хаваслӑ та усӑллӑ йӗркелеме салтаксем валли парне – купӑс, гитара, шашка-шахмат тата ытти хатӗр – туяннӑ.

Хӗсметрен таврӑнсан пайтах нушаланма тивнӗ Александр Витальевичӑн. Кил-çурт кивӗ, мачча кашти йӑтӑнса анас патнех çитнӗ. Те чӑнласа, те шӳтлесе арçын хӑйне хыпалансах авлантарнине асӑнчӗ. Апла пулин те мӑшӑрне Надежда Васильевнӑна вӑл паян кун та юратать, хисеплет, унпа мухтанать. Упӑшки салтакра ӳнерçӗ (сӑмах май, кӑмака купалама та, тимӗр шӑратма та, платник ӗçӗнче те пултарать) пулни пулӑшнӑ мар-и? Малтан арçынна хӗрарӑмсем сӑмса тутрине çаптарса илемлетме ыйтнӑ. Унтан саппун арки çине куçнӑ. Пӗчӗккӗн пасара кайса сутмалӑх пысӑк япаласене (простынь, минтер пичӗ тата ыт. те) те чечексем çаптарса илемлетнӗ. Алли ӗç патне пынӑран çӑмӑл май та шыраса тупнӑ. Хитрелӗхпе, типтерлӗхпе Альцевсен таварне çитекенни пулман. Чул çурт лартмалӑх та, машина туянмалӑх та укçа тунӑ. Çемьене ӑмсанакансем те тупӑннӑ, паллах. Çӗршыври финанс тытӑмӗнчи улшӑнусене пула укçан пӗр пайӗ çухатни те пулнӑ.

Çӑмӑл машина, выльӑх-чӗрлӗх Альцевсен халӗ те пур. Хапхи те илемлӗ – хӑй вӑхӑтӗнче Александр Васильевич ӑна хӑй капӑрлатнӑ. Анчах кирпӗч çурт çинчи çурӑлнӑ йӗрсем çемье йывӑрлӑхра пулнине уçӑмлӑнах палӑртаççӗ...

**Ирина НИКИТИНА.**

# Инкекӗн ури вӑрӑм

Хамӑр ял çынни пулсан та ӑна чылайранпа курман. Элӗк районӗнчи Вутланта çуралса ӳснӗ Владимир Мешков Муркаш районӗнчи Йӳçкассинчи инвалидсемпе ватӑ çынсен интернат çуртӗнче пурӑннине пӗрре мар илтнӗччӗ, анчах ун патне кайса килме ниепле те вӑхӑт тупӑнмарӗ. Халӗ тинех çула тухма май килчӗ.

Владимира куртӑм та кӗлетке тӑрӑх сивӗ чупса иртнӗн туйӑнчӗ: кӳме çинче вӑл, утаймасть. Мана палласа илнӗрен сӑн-пичӗ çуталчӗ унӑн. Пӗр-пӗрне сывлӑх суннӑ хыççӑн калаçу пуçартӑмӑр. Сӑмахламалли, чӑн та, самаях пухӑннӑччӗ, анчах та вӑл темиçе çул каяллахи пек пӗр тикӗссӗн калаçманни палӑрчӗ. Хӑш-пӗр сӑмах тытӑнчӑклӑрах тухрӗ. Çавах та унӑн шухӑш-кӑмӑлне ӑнланма май пулчӗ. Вӑл кунти пурнӑçпа кӑмӑллӑ. "Апат лайӑх çитереççӗ, меню аш-какайпа, тӗрлӗ йышши çимӗçпе пуян", – терӗ арçын. Инвалидсене вараланчӑк тумтирпе çӳретмеççӗ. Мунчара та çӑвӑнтараççӗ. Кӑмӑл пулсан душ та пур. Кунти условисем тивӗçтернине пытармарӗ ентеш.

– Инвалидсен çуртӗнче пурӑнма хӑнӑхрӑм пулин те тӑван кӗтес асран тухмасть. Хӑрах ура хускалманран кӳме çинчен тӑрса утаймастӑп, – калаçӑва тӑсрӗ Владимир Мешков. – Вӑй-хал пулман мар манӑн. "Волга" хуçалӑхра токарьте нумай çул ӗçлерӗм, пӗр вӑхӑт фермӑра та тӑрӑшрӑм. Пытармастӑп, "симӗс çӗлене" пула пӗтрӗм эпӗ. Хаяррине час-часах ӑша яни хӑйӗн ӗçне турӗ – чир çаклатрӑм. Больницӑра та сипленме тиврӗ. Шалкӑм çапнӑ хыççӑн вара утайми пултӑм.

Иртнишӗн кулянать, анчах вӑхӑта каялла тавӑраймӑн. Халӗ арçыннӑн кунсерен çын куçӗнчен пӑхма тивет.

**Юрий КОРНИЛОВ,**
**Элӗк районӗ.**

**АХ, АНЧАХ...**

# Çын пурнӑçӗ мӗн хак?

Вӗсене ӗçкӗçсем теме чӗлхем çаврӑнмасть. Чӳк уйӑхӗн пуçламӑшӗнче икӗ хӗрпе каччӑ пурнӑçне хаяр шӗвек татнӑ. Çук, сӑмакун, шурӑ эрех те мар, Bacardi Black ром. Кам шутланӑ чаплӑ эрех çын пурнӑçӗшӗн хӑрушӑ пуласса?

Чӳк уйӑхӗн 7-мӗшӗнче 22 çулти каччӑпа 20-ри хӗр алӑран ром туяннӑ. Кӗленче çинче «Bacardi Black» тесе çырнӑ этикетка пуррипе иккӗленсе тӑман. Çамрӑксем Шупашкарти тара илнӗ хваттерӗнче эрех ӗçсен хӑйсене япӑх туйнӑ, кӗçех иккӗшӗ те больницӑна çакланнӑ. Йывӑр наркӑмӑшланнӑскерсене тухтӑрсем те çӑлайман, вӗсем пӗрин хыççӑн тепри пурнӑçран уйрӑлнӑ.

Çак кунах Ишлейре пурӑнакан 30 çулти хӗрарӑм юлташӗн çуралнӑ кунӗнче каллех ром ӗçсе наркӑмӑшланнӑ. Аптранӑскере икӗ кунран больницӑна илсе çитернӗ. Ӑна та вилӗм аллинчен туртса кӑлараймаи, чӳкӗн 14-мӗшӗнче куçне ӗмӗрлӗхех хупнӑ. Уява наркӑмӑшлӑ эрехе инкек тӳсекенӗн мӑшӑрӗ илсе пынӑ. Кӗçех çакӑ та çиеле тухнӑ: Шупашкарти хӗрпе каччӑ та шӑпах унран ром туяннӑ-мӗн. 36 çулти пӗлӗшне те сутса ӗлкӗрнӗ арçын. Лешне те хаяр шӗвек ӗçнӗ хыççӑн больницӑна ӑсатнӑ.

Право органӗ уголовлӑ ӗç пуçарнӑ. Çак ӗçпе тӑватӑ çынна тытса чарнӑ. Республикӑра 900 ешӗк суя ром туртса илнӗ.

Ӗçе тӗпченӗ май çакӑ палӑрнӑ: 32-ри М. груз турттарассипе фирма йӗркеленӗ. Эрех сутма лицензи илмесӗрех унпа суту-илӳ тунӑ. Наркӑмӑшлӑ шӗвеке Чӑваш Республикин тулашӗнче туяннӑ. Пайтаçӑсем ӑна Шупашкарта, Улатӑрта сутнӑ. Пӗр литр рома 200 тенкӗпе ярӑнтарнӑ. Тӗпчев малтанлӑха палӑртнӑ тӑрӑх – суррогат эрехре метанол пур.

Халӗ судпа медицина тӗпчевӗ ирттереççӗ. Суя ромӑн çул-йӗрне тӗпчеççӗ.

Çакна та палӑртмалла: метил спирчӗн хутӑшӗпе наркӑмӑшланса Чӑваш Енре кӑна мар, çӗршыври больницӑсенче те темиçе çын вилнӗ. Тӗрӗслев вӑхӑтӗнче тӗрлӗ хулара суя ром, виски, шурӑ тата шампань эрехӗсене туртса илнӗ.

Республикӑри тӗп токсиколог Александра Прохоровская каланӑ тӑрӑх – метил спирчӗ алкогольти этил спиртӗнчен самай сиенлӗ. Унпа наркӑмӑшлансан, тухтӑрсенчен кая юлса пулӑшу ыйтсан çын вилет.

Суя эрех ӗçнӗ хыççӑн наркӑмӑшланни тӳрех сисӗнмест. Нумайӑшӗ чир паллисене ӳсӗрӗлнипе арпаштарать. Кун пек чухне вӑй пӗтет, ӑш пӑтранать тата ытти те. 1-2 кунран чир аталанать, пуç, хырӑм ыратма тытӑнать. Пуç çаврӑнать, куç япӑх курать. Çын тӑнне çухатма пултарать.

Метил спирчӗ мӗнпур органа сиенлетет, чи малтан – тӗп нерв тытӑмне, пӳрене. Унтан куç курасси япӑхланать. Специалистсем сӑра-эрехе шанчӑклӑ суту-илӳ çурчӗсенче кӑна туянма сӗнеççӗ. Енчен метил спирчӗпе наркӑмӑшланнине туйсан тӳрех хырӑмлӑха тасатмалла, васкавлӑ пулӑшу чӗнмелле.

**Л. АЛА.**

**ЫЙТУ – ХУРАВ**

## Кĕтме тивет

**Сирĕн хаҫата кашни ҫулах ҫырăнса илетĕп, кăсăкланса вулатăп. Хальхи вăхăтра мана ҫак ыйту канăҫ памасть: колхозра 30 ҫул ĕҫленисене 2016 ҫулта пенси ӳстерсе паратпăр тенĕччĕ. Анчах юлашки тапхăрта сас-хура лăпланчĕ. Ҫав Указа пăрахăҫларĕҫ-им?**

**Петр ПРОКОПЬЕВ,**
**Красноармейски районĕ,**
**Пайсупин ялĕ.**

Ялта пурăнакан пенсионерсене укҫа хушса парас вăхăта 2019 ҫулхи кăрлачăн 1-мĕшне куҫарнă.

Федерацин 2013 ҫулхи раштавăн 28-мĕшĕнче йышăннă 400-мĕш номерлĕ "Страхлав пенсийĕ ҫинчен" саккунĕн 17-мĕш статйипе килĕшӳллĕн 2016 ҫулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ял хуҫалăхĕнче 30 ҫултан сахал мар ĕҫленĕ тата хальхи вăхăтра ялта пурăнакан пенсионерсене 25 процент укҫа хушса тӳлеме палăртнă. Ҫакă ватлăхпа тата инвалидлăхпа пенсие тухнисене пырса тиветчĕ. Вĕсен уйăхри пенси укҫи сахалран та 1095 тенкĕ хушăнмаллаччĕ.

Анчах чӳк уйăхĕн 13-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думин депутачĕсем ял пенсионерĕсене хушса тӳлес вăхăта 2019 ҫулхи кăрлачăн 1-мĕшне куҫарассишĕн сасăланă. Ҫакă ҫĕршывра мĕнпур тивĕҫе пурнăҫлама укҫа-тенкĕ ҫитменнипе ҫыхăннă.

## Ҫар пенсийĕ ӳсет, анчах...

РФ Президенчĕн 2012 ҫулхи ҫу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи «РФ ҫар службине малалла лайăхлатасси ҫинчен» Указĕпе ҫар службинчен каякан граждансен пенсине ҫулсерен инфляци шайĕнчен 2 процент ытларах ӳстерме Правительствăна хушу панă. Чӳкĕн 13-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думинче пĕрремĕш вулаврах йышăннă саккун проекчĕпе килĕшӳллĕн службăри ҫар ҫыннисен ĕҫ укҫи (ăна пенси палăртнă чух шута илеҫҫĕ) 2016 ҫултан 2 процент чухлĕ ӳсмест.

Анчах ҫав вăхăтрах пенси панă чух шута илекен укҫа-тенкĕ тивĕҫтерĕвĕ 2016 ҫулхи нарăсăн 1-мĕшĕнчен ҫар ҫыннин укҫа-тенкĕ тивĕҫтерĕвĕн 69,45 проценчĕпе танлашать.

2014 ҫулхи раштавăн 1-мĕшĕнче йышăннă федераци саккунĕпе ҫар пенсине палăртнă чух шута илекен укҫа-тенкĕ тивĕҫтерĕвĕ 2015 ҫулхи юпа уйăхĕнчен пуҫласа 66,78 процентпа танлаштарнине шута илсен нарăс уйăхĕнчи ӳсĕм чăннипе 3,99 процент кăна пулать. Ку инфляци шайне (12,2 процент) ҫитеймест.

**АКЦИ**

## Пур – пĕрле, ҫук – ҫурмалла

Чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуҫласа кăрлачăн 15-мĕшĕччен Чăваш Енре «Ҫĕнĕ ҫул – ҫĕнĕ ҫемьере» акци иртет. Ҫавна май аслисем ача ҫурчĕсенчи шăпăрлансене каникул вăхăтĕнче ҫемьене илме пултараҫҫĕ.

Ачасене ҫемьене вăхăтлăх илес тесен вырăнти опекăпа попечительлĕх органĕсене ҫитмелле, кирлĕ документсем пухмалла. Паллах, Ҫĕнĕ ҫула кил-йышпа пĕрле уявлама ĕмĕтленеҫҫĕ ачасем. Хальлĕхе 143-шĕн ĕмĕчĕ пурнăҫланнă темелле.

**ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ**

## Ĕне пăруланă хыҫҫăн



Хĕллехи тапхăрта (юпа–ҫу уйăхĕсем) ĕне вырăнхăшăн тĕп апат утăпа улăм шутланать, сĕткенлисенчен – вырăнхăшăн кăшманĕ, кавăн, силос. Унсăр пуҫне концентрат ҫинчен манмалла мар.

Пăруласассăнах ĕнене пĕр витре ăшă шыв ĕҫтермелле. Унта пĕр килограмм тырă хывăхĕ тата 50 грамм тăвар ярсан аван.

Пăруласан пирвайхи кунсенче тăраниччен пахалăхлă утă ҫитермелле. Ĕне ҫилли малтанхи виҫене ларсан тата шыҫăнса тăмасан кăна концентратпа вырăнхăшăн кăшманĕ пама юрать. Хăш-пĕр ĕнен ку тапхăр 10-15 куна тăсăлать, теприн – ытларах та.

Ҫилли йĕркене кĕрсен вырăнхăшăн сĕт хушма тытăнмалла. Ĕнене паракан концентратпа кăшман виҫине кун сиктерсе ӳстереҫҫĕ, утăпа улăма пĕр пек шайрах тытса пыраҫҫĕ е ытларах ҫинине кура виҫене улăштараҫҫĕ. Тĕслĕхрен, талăкра 15 кг сĕт антарма ĕнене 6-8 кг утă, 3-4 кг улăм, 5 кг концентрат, 10 кг вырăнхăшăн кăшманĕ ҫитермелле. Тепĕр кунне концентрата – 1 кг, вырăнхăшăн кăшманне 4 кг ытларах параҫҫĕ. Енчен те икĕ кунран сăвăм 2-3 литр ӳссен каллех апат виҫине пысăклатаҫҫĕ. Сăвăм ӳснине кура малалла та ҫапла апатлаҫҫĕ. Вăл ӳсни палăрмасан ĕнене пирвайхи рационпах ҫитереҫҫĕ.

Сăвăма тата сĕтри ҫу шайне пысăклатма 1 кг концентрата 0,7-1 кг хĕвел ҫаврăнăш каяшĕпе улăштараҫҫĕ. Ҫитериччен ăна вĕри шывра ислентермелле, унтан утăпа тата улăмпа хутăштармалла. Чылай чухне ĕне улăма тата хулăн туналлă курăкран хатĕрленĕ утта нумай ҫиеймест, ҫавăнпа вĕсене 3-5 см таран вĕтетмелле, тырă хывăхĕпе, тăварпа сапмалла, унтан вĕри шывпа хутăштармалла та пĕр каҫлăха ăшă вырăнта лартмалла. Апата йывăҫ каткара е ытти савăтра тытсан лайăх.

Кукурус силосне ĕне сĕт антарнă тапхăрта 10-20-шер кг памалла.

## Сурăх сăваççĕ

Нумайăшĕ сурăха ҫăмшăн тата какайшăн усрать. Унăн сĕчĕпе сайра усă кураҫҫĕ, халăх ăна ĕҫмест. Анчах та унран апат-ҫимĕҫ хатĕрлекен регионсенче (Раҫҫейре – Дагестанра, ҫывăхри ҫĕршывсенче – Арменире, Азербайджанра, Узбекистанра, Молдоврăра) сурăха сăваҫҫĕ.

Сĕтĕнчен хытă тата ҫемҫе йышши сырсем тăваҫҫĕ. Уйрăмах брынза анлă сарăлнă. Хăш-пĕр сурăха путекне пуснă хыҫҫăнах (ҫуралсан 3-5-мĕш куннех) сума тытăнаҫҫĕ, ытти йышшине пăранланă хыҫҫăн – 2-2,5 уйăхран.



## Ҫителĕклĕ тивĕҫтермелле

Вырăнхăшăн организмĕнче шыв 70 процента ҫитет. Вăл унăн клеткинче, тĕртĕмĕнче пур. Юн, лимфа, апат ирĕлтерекен сĕткен, сĕт шывран тăрать, вăл минерал япаласен ылмашăвне витĕм кӳрет. Организмран тарпа тухса ăшша тытма пулăшать.

Шыв ҫитмесен чылай орган ĕҫĕ пăсăлать, вăл 20 процент таран ҫухалсан вĕсем пачах ĕҫлеме пăрахаҫҫĕ, вырăнхăх вилет. Ҫавăнпа унăн сывлăхне упрас тата тухăҫлăхне ӳстерес тесен шывпа ҫителĕклĕ тивĕҫтермелле.

Вырăнхăх-чĕрлĕхе талăкра кирлĕ шыв виҫи:
– сăвакан ĕнене – 90-115 литр
– пăрăва – 30-35 л
– сысна амине ҫурисемпе пĕрле – 75-100 л
– самăртмалли сыснана – 25 л
– сурăха – 10 л
– чăхха – 0,5 л
– хурпа кăвакала – 1 л.

Сăвакан ĕнене кашни литр сĕт валли 4-6 литр шыв каять.

Вырăнхăха таса шыв памалла. Вăл 8 градусран сивĕ пулмалла мар.

Сивĕ шыв ĕҫтерсен вырăнхăх чирлет, пĕтĕ ĕне пăрулаймасть, унсăр пуҫне организм та сивĕнет. Ăна ăшăтма хушма апат ҫитермелле. Ҫавăнпа хĕлле шыва кăшт ăшăтса шăвармалла. Анчах 15 градусран ытла вĕрилентермелле мар, ытлашши ăшă шыв вырăнхăх ăшне кантармасть.

**ТĔПЕЛ**

## Чахохбили



*Кирлĕ пулать: 1 кг чăх ашĕ, ҫупкăм кинза, 1 чей кашăкĕ аджика, 2 пуҫ сухан, 4 помидор, 1 апат кашăкĕ томат пасти, 2 пылак пăрăҫ, 3 шăл ыхра, ӳсен-тăран ҫăвĕ, тăвар, авăртнă хура пăрăҫ.*

Чăх какайне саралса хĕреличчен ăшаламалла, тăвар сапса турилккене хумалла. Сухана пăшăхламалла. Ҫатмана аш, туранă помидор, 1 стакан шыв (томат пасти ирĕлтернĕскере) ямалла, 5 минут ҫулăм ҫинче тытмалла. Пăрăҫ, вĕтетнĕ ыхра, кинза, аджика, тăвар ямалла. Хупăлчине хупса 40 минут пăшăхламалла.

## Сĕнӳ-канаш

**ВАРЕНИ ПĂСĂЛАСРАН**

Варени ҫинче кăвакăш курăнсан ҫимĕҫе кăларса пăрахма ан васкăр. Ăна пуҫтарса илмелле, банкăна ҫиелтен спиртпа йĕпетнĕ хутпа хупламалла. Вăл ҫимĕҫе пăсăласран упрать. Кăшт вăхăт иртсен хута улăштармалла.

**НӲРĔ САЛФЕТКА**

Нӳрĕ салфетка типсен чĕркеме 1 чей кашăкĕ шурă эрех ярса хупламалла. 30 минутран салфетка тин туяннă пек пулĕ.

**ҪĔРУЛМИ ШĂТАСРАН**

Ҫĕрулми упракан миххе темиҫе панулми хурсан шăтмасть.

**КĔРПЕ УПРАМА**

Кĕрпене пир хутаҫра упрамалла. Хутаҫне вара маларах 20 минут тăвар шывĕнче вĕретмелле, типĕтмелле. Кун пек тусан кĕрпене нимĕнле хурткăпшанкă та тапăнмасть.

**КЛЕЕНКА**

Сĕтел ҫине сарнă клеенка час-часах кĕтесрен ҫĕтĕлет. Ҫапла ан пултăр тесен клеенкăна ҫирĕплетмелле, кĕтес тĕлне шал енчен лейкопластырь ҫыпăҫтармалла.



## Юратнă юрă

**«Хресчен сасси» хаҫата юратса вулатăп, ҫырăнса илетĕп. «Юратнă юрă» рубрикăпа та паллашсах тăратăп. Нумаях пулмасть радиопа пĕр юрра кăмăлласа итлерĕм. Унта «калуш кайрĕ Атăла» сăмахсем пур. Ăна пичетлеме май килмĕ-ши?**

**Елена ИВАНОВА.**
**Ҫĕрпӳ районĕ,**
**Михайловка ялĕ.**

**АТĂЛ УРЛĂ КАҪНĂ ЧУХ**

*Чăваш халăх юрри*

Атăл урлă каҫнă чух,
Калуш кайрĕ Атăла.
Калуш аса килмерĕ,
Тăван асран каймарĕ.

Атте тунă ҫăпатине,
Калушран та юратап.
Атте тунă кил-ҫуртне,
Хуларан та юратап.

Анне пĕҫернĕ ҫăкăрне,
Кулачран та юратап.
Ҫичĕ ютсем хушшинче,
Хам тăвана юратап.

Атăл урлă каҫнă чух,
Калуш кайрĕ Атăла.
Калуш аса килмерĕ.
Тăван асран каймарĕ.

*Асăрхаттарни: кашни йĕркене икшер хут юрламалла.*

СЫВЛĂХ

## Усăллă е сиенлĕ?

**Нумаях пулмасть пахчари хура пилеше пухса типĕтме хутăм. Анчах вăл сиенлĕ пулнине илтрĕм, юна çăратать имĕш. Тĕрĕсех-ши çакă?**

**Ольга ВАСИЛЬЕВА. Канаш районĕ.**



Хура пилешре С,Р витаминсем, каротиноид, органика йӳçекĕ, пектин нумай. Атеросклероз, гипертони, çавăн пекех организмра витаминсем çитменнипе аптракансемшĕн вăл питĕ усăллă. Çав вăхăтрах хура пилеш юна çăратни пирки те манмалла мар. Çавăнпа ăна асăрханса çимелле.

## Чул ăçтан тупăнать?

Уролог патне килекен пациентсенчен 40 проценчĕ шăк кăларакан тытăмра чулсем пуррипе аптрать. Çак чире ытларахăшĕ пахалăхсăр шыв ĕçнипе сăлтавлать. Анчах ку пулăм хăш-пĕр региона çеç пырса тивет. Сăмахран, Çĕпĕрте шыв хытă, унта тăвар нумай. Статистика кăтартăвĕпе асăннă тăрăхра пурăнакансенчен нумайăшĕ çак чирпе нушаланать.

Чир сăлтавне несĕлтен куçнине те шута илмелле. Ытларах вăл хĕрарăмсенчен ламран лама куçать.

Чул чылай чухне пӳрере пулать. Организмран тухнă май ырattарать. Хальхи вăхăтра ăна операцисĕр те кăларaççĕ: ультрасасăпа, çавăн пекех эндоскопи мелĕпе те ватаççĕ.

Çак чиртен хăтăлас тесен шыв нумай ĕçмелле. Çитĕннисен – кунне 11 стакан. Яшка, улма-çырла шутланмасть. Ытларах хăвăр тăрăхри шывпа усă курмалла. Паллах, фильтр витĕр кăларнине çеç ĕçме юрать.

## Чĕркуççи тăртансан

• Чĕрĕ çĕрулмине вĕтĕ теркăпа хырмалла, ыратакан вырăна компресс хумалла. Кун пек чухне пихтăран тата эвкалиптран хатĕрленĕ ванна та пулăшать. Е лимонпа сельдерей шĕвекне ĕçмелле: вĕсене пĕр пек виçепе илмелле, вĕтетмелле, шыва ярса вĕретмелле, сăрăхтармалла, сивĕ вырăнта 3 кун тытмалла. Кунне виçĕ хутчен 3-шер апат кашăкĕ ĕçмелле. Кĕтмел çулçинчен хатĕрленĕ шĕвек те аван.

• Тĕрĕс апатланмалла. Тăварлă, тĕтĕмленĕ, ăшаланă апатран хăпмалла. Ытларах улма-çырла, пахчаçимĕç, ӳсен-тăран çăвĕ, сĕт-турăх, пĕвер, пулă çимелле.

## Чире çĕнтертĕм

20 çул экземăпа нушалантăм. Унран хăтăлма мана çакнашкал маç пулăшрĕ: 2 апат кашăкĕ услам çу, 1 апат кашăкĕ пыл, 1 çăмарта, 1 апат кашăкĕ уксус илмелле, хутăштармалла. Хатĕр маçпа сурансене сĕрмелле. Вăл сивĕ, тĕттĕм вырăнта вăрах упранать.

**Надежда КУЗНЕЦОВА. Канаш районĕ.**

## Тăрса е ларса ĕçлемелле?

Америка тухтăрĕсем пĕлтернĕ тăрăх – тăрса ĕçлени ларнинчен усăллăрах иккен. Çын икĕ сехет тăрса вăй хурать пулсан юнри сахăр тата çу шайĕ чакнине палăртаççĕ вĕсем.

## Пăрăç çийĕр, нумай пурăнăр!

Китай ăсчахĕсем 500 пин çынна тĕпчесе тишкернĕ хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă: чили пăрăç çиекенсем çирĕп сывлăхлă, сивĕре те шăнса пăсăлмаççĕ, шыçă чирĕпе те сайра чирлеççĕ. Вĕсен чĕрисем те лайăх ĕçлеççĕ. Унсăр пусне чили организмри çăва шăратма пулăшать, çавăн пекех пĕвере тасатать.

## Шута илме

**Вĕри çăкăр** организмшăн сиенлĕ. Унта клейковина пур, çавна май апата ирĕлтерекен тытăма йывăр килет. Мĕншĕн тесен вăл хырăмлăхра часах ирĕлмест. Çавăн пекех вĕри çăкăр çинĕ хыççăн çинçе пыршă хăйĕн çурхахĕ тавра çаврăнса пăвăнма пултарать. Ахальтен мар Раççейре патша вăхăтĕнче вĕри çăкăр сутма чарнă. Пиçсе тухнă хыççăн сахалран та 4 сехет кĕтнĕ.

**Тин вĕренĕ чей** те сиенлĕ. Ăна тӳрех ĕçме тăхтамалла, 4-5 минут кĕтмелле. Унсăрăн пыр ракĕпе чирлес хăрушлăх пур. Пыр тĕртĕмĕ пиçнĕрен каярахпа çак чир аптратма пултарать.

Тухтăрсем ытлашши **вĕри тата сивĕ апат** çиме сĕнмеççĕ. Сивĕскер хырăмлăхра часах ирĕлейменрен çын самăрălма тытăнать. Вĕри апат вара ферментсене аркатать.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

ХАЛĂХ СĂНАНИНЧЕН

• Раштав уйăхĕнче хăвăрт тĕттĕмленет те часах çутăлмасть.

• Вунă çулта пĕр хутчен раштав та ăшă пулать, хăш-пĕр чухне юра та ирĕлтерет.

• Хĕл шурăрах пулсан çу симĕсрех пулмалла.

• Нумай юрлă, сивĕ раштав – пулăхлă тыр-пула мухтав.

• Юр йĕпе çĕр çине ӳксе хĕл ларсан çуркунне çеçпĕлсем пĕр харăс ир çурăлаççĕ, анчах кăмпа сахал пулать.

• Çĕр çумĕнчен тĕтре карсан – çанталăк ăшăтасса.

• Çил Çурçĕртен вĕрме тытăнсан, пĕлĕтсем тухмасан – çанталăк сивĕтессе.

ЧĂННИ ТЕ ПУР-ТĂР

■ Эрне кун хĕр çураçма лайăх.

■ Çĕнĕ çынсене ан пăсчăр тесен пушмак ăшне пилеш çулçи хураççĕ, çырлине вара кĕсьене пытараççĕ.

■ Çĕнĕ çынсен вырăнне никамăн та ларма юрамасть, пурнăçра йывăрлăхсем пулĕç.

■ Çĕнĕ çынсене çĕçĕ-вилка парнелеме юрамасть.

■ Качча кайнă хĕр малтанхи кĕпине килне кайса çусан ырă курмасть теççĕ.

■ Каччă авланнă чух хăрах ури çинче тайăлса тăрсан кахал теççĕ.

■ Венчете кайнă чух çумăр çусан – ĕмĕрĕпех макăрасса.

■ Хытă алăллă çын инке-арăм илет теççĕ.

■ Çăкăра тикĕс касмасан – пурнăç йывăр пуласса.

■ Хĕвел аннă хыççăн çăкăр пуçласа çисен – чухăн пуласса.

■ Çăкăр кăпăшка пиçтĕр тесе авалтан хĕрарăмсем кĕпе аркине çĕклесе: «Лайăх хăпар», – тенĕ.

■ Хăнана тин пиçсе тухнă çăкăрпа кĕтсе илни – пуянлăха.

■ Çăкăра тĕрлĕ çĕçĕпе кассан харкашу пулать теççĕ.

■ Çул çӳреврен юлнă çăкăра çиме, пӳрте илсе кĕме сĕнмеççĕ. Чирлессе пĕлтерет имĕш. Ăна выльăх-чĕрлĕхе памалла.

ПĔЛМЕ КĂСĂК

✓ Чи сиенлĕ апат-çимĕç – чипсы. Унта канцерогенсем, ароматизаторсем, тĕрлĕ çу...

✓ Варвиттирен банан çиме сĕнеççĕ. Вăл пирус туртма пăрахакансемшĕн те усăллă. Унта никотина организмран кăларма пулăшакан кали, магни, тĕрлĕ витамин нумай.

✓ Гранат инсулина улăштарать. Çавăнпа ăна сахăр чирĕпе нушаланакансен çимелле.

✓ Пуç мимишĕн чи усăллă апат-çимĕç – аçтăрхан мăйăрĕ, сардина, тунец, лосось.

✓ Хуратул юнри сахăр шайне йĕркелет.

✓ Цитрус çимĕçĕсене е сĕткенне выç варла çиме-ĕçме юрамасть. Унсăрăн аллергипе е хырăмлăхăн лăймака сийĕ шыçнипе чирлеме пултаратăн.

ПАХЧАÇĂ

## Вăрлăх пахалăхĕ чакĕ-ши?

**Çулсеренех пахчаçимĕç вăрлăхĕ чылай туянатăп. Ытлашши юлни пухăнсах пырать. Чĕркемри вăрлăха хăçанччен упрама тата унпа усă курма юрать-ши?**

**Валентина МИХАЙЛОВА. Елчĕк районĕ.**

«Упрамалли вăхăт» ăнлава «шăтаслăх» тенипе арпаштармалла мар. Упрамалли вăхăта чĕркемре кăтартаççĕ. Вăл кашни ӳсен-тăранăн тĕрлĕрен, ăна кура шăтаслăхĕ те. Сăмахран, томатăн çак вăхăт 5-6 çул, пуçлă суханăн – 2-3. Вăрлăх лайăх шăттăр тесен упрамалли йĕркене пăхăнмалла. Сывлăш температури 5 градус ăшă, сывлăшри нӳрĕк 55 процент пулмалла. Килти условисенче ăна пăхăнма йывăр. Кирек мĕнле пулсан та акас умĕн вăрлăх шăтаслăхне тĕрĕслемелле.

**Татьяна ЮРЬЕВА.**

## Тухăçа ӳстерме

**Çулсерен пĕр вăрлăх лартсан çĕрулми тухăçĕ палăрмаллах чакать. Ăна пысăклатма мĕн тумалла?**



1 Вăрлăха чи пысăк тухăçлă тĕмĕрен суйласа хăвармалла, шывпа çумалла. Пысăк савăтра марганцовка шĕвекне хатĕрлемелле (тĕксĕм хĕрлĕ тĕслĕ пулмалла), вăрлăха тултарса 15-20 минут лартмалла. Сорт тăрăх суйласа ещĕке тултармалла, хĕвел çинче эрне ытла тытмалла. Унтан нӳхрепе антармалла.

2 Пахчаçимĕçе пуçтарса кĕртнĕ хыççăн лаптăка сидерат – ыраш, горчица – акмалла. Сăнанă тăрăх – ыраш аксан аванрах. Вăл çĕрулми хыççăн тăпра пулăхне пуянлатма пулăшать. Иртнĕ çул ыраш хĕл ларичен самай ӳсме ĕлкĕрчĕ. Кăçал горчица вара йĕркеллĕ çитĕнмерĕ. Çитес çул фацели (пыл курăкĕ) акса пăхасшăн. Вăл горчицăран хăвăртрах ӳсет.

3 Хĕл каçа çĕнĕ вăрлăх туянсан та пăсмасть. Ăна тĕрлĕ фирма урлă, куравсенче, пасарта пахчаçăсенчен туянма пулать. Харăсах нумай илмелле мар, малтанлăха пĕр витре те çителĕклĕ. Сортсене хутăштармасăр лартмалла: пирĕн тăрăхра хăшĕ лайăхрах çитĕннине пĕлме пулать.

4 Лартас умĕн çĕрулми вăрлăхне икĕ виçĕ эрне ăшăтмалла. Çав хушăра вăл шăтма тытăнать. Унтан кашни сортне клеенка çине хурса чир-чĕртен сăтăрçăсенчен сыхлама ятарлă препаратпа сирпĕтмелле. Çиелтен йывăç кĕлпе, хăрăмпа сапмалла.

5 Пахчари çĕрулми лаптăкне çулсерен ытти пахчаçимĕçпе улăштарса тăмалла. Кĕркунне сидерат (ырашпа горчица) çийĕн пахчипех извеç, пурă сапсан та аван.

УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Чӳк, 27 – эрне кун | Чӳк, 28 – шăмат кун | Чӳк, 29 – вырсарни кун | Чӳк, 30 – тунти кун | Раштав, 1 – ытлари кун | Раштав, 2 – юн кун | Раштав, 3 – кĕçнерни кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.50 | 7.52 | 7.54 | 7.56 | 7.57 | 7.59 | 8.00 |
| | анать | 15.26 | 15.25 | 15.24 | 15.23 | 15.22 | 15.21 | 15.20 |
| Кун тăршшĕ | | 7.36 | 7.33 | 7.30 | 7.27 | 7.25 | 7.22 | 7.20 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун |
| | (12 сехет тĕлне) | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче |



## Чӳк, 29: Анне кунӗ

# Вӑл пуртан тӗнче илемлӗ

**Ҫак уява тӗнчере тӗрлӗ вӑхӑтра палӑртаҫҫӗ. Вӑл Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗнчен уйрӑлса тӑрать, амӑшӗсен тата ҫие юлнӑ хӗрарӑмсен уявӗ шутланать.**

### Хӑҫан тата мӗнле уявлаҫҫӗ

Америкӑра Анне кунне пӗрремӗш хут 1872 ҫулта Джулия Уард Хоу пуҫарӑвӗпе ирттернӗ. Пӗлтерӗшӗпе вӑл Мир кунне ҫывӑх пулнӑ. 1907 ҫултанпа ҫак куна асӑннӑ ҫӗршывра ҫу уйӑхӗн иккӗмӗш вырсарни кунӗнче паллӑ тӑваҫҫӗ. 1914 ҫулта Вудро Вильсон президент ӑна официаллӑ уявсен йышне кӗртнӗ.

Анне кунне ҫу уйӑхӗн иккӗмӗш вырсарни кунӗнче Данире, Финляндире, Германире, Италире, Турцире, Австралире, Японире, Бельгире, Украинӑра, Эстонире палӑртаҫҫӗ.

Германире ӑна пирвайхи хут 1923 ҫулта ҫу уйӑхӗн 13-мӗшӗнче ирттернӗ, Финляндире вара – 1927 ҫултанпа. Уявра ялавсем ҫакаҫҫӗ, ачасем амӑшӗсем валли парнесем хатӗрлеҫҫӗ, ашшӗсем тӗпелте апат-ҫимӗҫ пӗҫереҫҫӗ. Асламӑшӗсемпе кукамӑшӗсене те саламлаҫҫӗ.

Эстонире 1992 ҫултанпа уявлаҫҫӗ. Унта та ялавсем ҫакаҫҫӗ. Шкулсемпе ача сачӗсенче концертсем йӗркелеҫҫӗ, ачасем амӑшӗсене хӑйсем ӑсталанӑ парнесемпе савӑнтараҫҫӗ.

Украинӑри Галичинӑра Анне кунне 1929 ҫултанпах ирттернӗ. Каярахпа ун пирки маннӑ. Халӗ ӑна ҫу уйӑхӗнче палӑртаҫҫӗ.

Грецире ҫу уйӑхӗн 9-мӗшӗнче йӗркелеҫҫӗ. Унта ку уявӑн историйӗ авалхи Грециренех пырать. Грексем пӗтӗм турӑсен амӑшӗн, Гейӑн, кунне паллӑ тунӑ.

Раҫҫейре Анне кунне 1998 ҫултанпа ирттереҫҫӗ. Чӳк уйӑхӗн тӑваттӑмӗш вырсарни кунӗнче палӑртаҫҫӗ. Йӑлана кӗнӗ тӑрӑх ача-пӑчана лайӑх воспитани парса ҫитӗнтернӗ хӗрарӑмсене, нумай ачаллӑ амӑшӗсене саламлаҫҫӗ.

Беларуҫра ку уява 1996 ҫулхи юпа уйӑхӗн 14-мӗшӗнчен ирттерме палӑртнӑ. Арменире Анне кунӗ – ака уйӑхӗн 7-мӗшӗнче.

### Юратар аннене сывӑ чух...

Уява хӑть хӑш вӑхӑтра палӑртсан та унӑн пӗлтерӗшӗ ҫав тери пысӑк. Анне пуриншӗн те пӗрре. Ахальтен мар ӑна хӗвелпе танлаштараҫҫӗ. Унран хакли, ҫывӑххи никам та ҫук тӗнчере. Ҫавӑнпах ӗнтӗ пепке чи малтан «анне» сӑмаха калать хӑй пурнӑҫӗнче. Пӗчӗкрен лӑпкаса, ачашласа ҫитӗнтернӗ ҫын сӑнарне нихӑҫан та асран кӑлармалла мар, ӑна тав тума пӗлмелле. Юрӑри йӗркесене асра тытмалла:

*Юратар аннене сывӑ чух,*
*Хаклар ӑна пурӑннӑ чух.*
*Пулӑшар аннене вӑйсӑр чух,*
*Ӑнланар ӑна йывӑр чух.*

Аннесем пуртан тӗнче илемлӗрех, савӑкрах туйӑнать. Вӗсем ырӑ-сывӑ пурӑнни – телей. Пурнӑҫран уйрӑлнӑ пулсан та вӗсен сӑнарӗсем ачисен асӗнче упранӗҫ. Мӗншӗн тесен анне пӗрре ҫеҫ. Ӑна никампа та улӑштараймӑн.

Ҫак куна пирӗн вулакансем еплерех уявлаҫҫӗ-ши? Вӗсене сӑмах парар-ха:

**Евгения ЖАЧЕВА, тӗрӗ ӑсти:**

– Питӗрте пурӑнакан Гурий ывӑлтан кашни ҫулах ҫак кун шӑнкӑрав кӗтетӗп. Вӑл унта культура институтӗнче ӗҫлет. Ачана тӗрӗс воспитани парса ҫитӗнтернӗшӗн савӑнатӑп.

Аннене уявра ҫеҫ мар, часчасах аса илетӗп. Манӑн килте «Йӑх-несӗл йывӑҫҫи» тӗрӗ ҫакӑнса тӑрать. Унта 240 ҫын ячӗ. Ир те, каҫ та пӑхнӑран тӑванпӗтен куҫ умне тухать. 7 ачана пӑхса ҫитӗнтерме ҫӑмӑл пулман аттепе аннене. Пире пӗлӳ пама вӑй та, ӑс та кирлӗ пулнӑ. «Алӑри пӳрнесем пекех ачасем те расна, ҫапах пурне те пӗр пек юрататӑп», – тетчӗ анне. Унӑн сӑнарӗ нихҫан та куҫ умӗнчен каймасть.

**Владимир ПЕТРОВ, Тӑвай районӗнчи Енӗш Нӑрвашри историпе асӑну музейӗн ертӳҫи:**

– Турра шӗкӗр, анне пурӑнать манӑн. Вӑл тӑхӑр теҫеткерен иртрӗ. Ӗҫе кайнӑ май кашни кунах кӗрсе тухатӑп ун патне: юн пусӑмне виҫетӗп, эмел паратӑп. Мӑшӑр ӑна апатҫимӗҫ пӗҫерсе ҫитерет. Мӑнуксем те пулӑшма ҫӳреҫҫӗ. Ку уяв «ҫамрӑк» пулнӑран ӑна пӗлсех каймасть вӑл. Ахаль чухне кучченеҫпе кӗрсен те: «Мӗнле уяв паян?» – тесе кӑсӑкланать. Анне кунӗнче тутлӑ апат-ҫимӗҫпе хӑналатпӑр ӑна, ӑшшӑн саламлатпӑр.

**Елена ЕВЛАМПЬЕВА, Канаш районӗнчи Тӑрӑн ялӗ:**

– Ҫак кун ача усрама илнӗ ҫемьесемпе пӗрле эпир ҫулсеренех Канашри реабилитаци центрӗнче пуҫтаранатпӑр. Кунта тӗрлӗ конкурса хутшӑнатпӑр. Ачасене ҫемьене йышӑнакан амӑшӗ шутланатӑп эпӗ. Хамӑн пӗр хӗр, унсӑр пуҫне 4 пӗртӑвана хӳтте илтӗм. Хальхи вӑхӑтра пурте шкулта вӗренеҫҫӗ. Анне кунӗнче ятарлӑ открыткӑсем хатӗрлеҫҫӗ, вӗсене мана парнелеҫҫӗ. Каярахпа пурте пӗрле сӗтел хушшине ларатпӑр, уяв ячӗпе торт ҫиетпӗр.

**Валентина ПЕТРОВА.**

◆ АЛ ӐСТИ

# Чечексен ытамӗнче

Пӳртре чӳрече анисем ҫине тата урайне лартса тухнӑ чечексене вӑл юратса пӑхать. Ҫулталӑк тӑршшӗпе ҫумӑр шывӗпе кӑна шӑварать. Хӗлле валли те ҫиттӗр тесе ӑна ятарласа флягӑсене тултарать. Чӳлмекри чечексемшӗн ҫумӑр шывӗ сиплӗ пулнине хӗрарӑм хаҫат-журналта вуласа пӗлнӗ. Тӗрлӗ йышши сӗнӳ-канаш куҫ тӗлне лексессӗнех вӗсене уйрӑм тетраде пуҫтарать. Патӑрьел районӗнчи Анат Туҫара пурӑнакан Шура аппа тивӗҫлӗ канӑва кайни самай ӗнтӗ. Унашкаллин темӗн тума та вӑхӑт пур тетӗр пулӗ. Ҫапли ҫаплах, анчах Александра Алексеевна Кузнецова самант та ӗҫсӗр лараймасть: урин утмалла, аллин ӗҫлемелле. Пуҫӗпе чунӗ канӑҫсӑртан мар-и ҫав?

Вырӑнти ял хуҫалӑх предприятийӗнче техник-осеменаторта тӑрӑшнине аса илсен хӑй те тӗлӗнет. Чӗре ҫумӗнче йӑтса ҫӳрекен хӗрне кӗҫвӗҫ ҫуратмалла – вӑл ниме пӑхмасӑр ӗне пӗтӗлентерет. Унччен маларах ялти стройкӑра тар тӑкнӑ. Ҫавах та ферма ӗҫӗ ӗмӗрлӗх юлнӑ. Халӗ сӑнатӑн та – ларма-тӑма пӗлменскер унта чупса ӗҫлени пирки пач иккӗленместӗн. Ахальтен мар унран тепӗр чухне пуслӑхсем те тӑрӑхлама пӑхнӑ: " Эсӗ кам вырӑнне ӗҫленине пӗлсе ҫитерес ҫук. Те доярка, те осеменатор, те ветеринар...". Такама та улӑштарма пултарнӑ вӑл.

Ирхине пилӗк сехетре тӑрса ӗҫе васкакан, тепӗр чух ҫур ҫӗр иртсен кӑна киле таврӑнакан хӗрарӑм илемлӗ тӗрӗсем тума мӗнле ӗлкӗрнӗши? Мӗн пенсие кайиччченех тӗрлеме вӑхӑт тупнӑ-ҫке Александра Алексеевна. "Малтан килҫурт тӗрӗ ӑшӗнчечӗ, халӗ – алӑпа ҫыхнӑ чечексен ытамӗнче. Ман мӑшӑр пек маттурри ҫук", – тивӗҫлипе мухтанать упӑшки.

Ӗҫченлӗх, типтерлӗх, тӗплӗх тем тесен те йӑхранах пырать пулӗ. Пӗр саманта хӗрарӑм паянхи кун пек астӑвать. Тепле майпа ӗшӗннӗрен 4 класс хӗрачи вырӑн ҫине выртнӑ. Ӗҫрен ҫитнӗ амӑшӗ ҫакна курсан: "Ҫынсен хӗрӗсем тӗрлеҫҫӗ. Эсӗ ҫывӑратӑн", – тесе ятлаҫнӑ. Ара, кӳршӗ хӗрачи хитре тӗрӗ тунине курнӑран Шурӑна та унран юлтарас килмен-ҫке унӑн. Ҫакӑн хыҫҫӑн пуҫласа тутӑр тӗрленӗ вӑл. Хӑйӗн ӗҫне ялти выставкӑна тӑратнине те манман.

Халӗ пӗртен-пӗр Марина хӗрӗ ӳссе ҫитӗннӗ ӗнтӗ, мӑнуксем те парнеленӗ. Амӑшӗ ӑна хӑй пекех тӗрлеме, ҫыхма хӑнӑхтарнӑ. Пульницара выртнӑ хушӑра кунчасӑр нуски ҫыхсан хӗрӗн ал ӗҫ ӑсталӑхӗ малалла аталаннӑ. Ачисене хӑй ҫыхнӑ япаласем тӑхӑнтартсах ӳстернӗ.

Ҫӑм ҫиппинчен чечек ҫыхма хӗрарӑм ҫын ӗҫне пӑхса вӗреннӗ. Флокс кил-ҫуртра ӑҫта кӑна ҫук-ши: шкапра, минтер пичӗсем ҫинче, ӳкерчӗкре... Канӑҫсӑр хӗрарӑмӑн юнӗ хӗр чухнехилле вӗренине туйса тӑратӑн. Пӗр япалана илемлетсен куҫ тӳрех теприне шырать. Ӑна еплерех чиперлетме пулать-ши тесе пуҫ ватма тытӑнсанах алӑ витӗр черетлӗ илем тухать.

Александра Алексеевнӑна "пенси карчӑкӗ" теме чӗлхе ҫавӑрӑнмасть. Унӑн фантазийӗ тапса тӑрать тейӗн. Кун пек ҫын ҫумне чир ҫулӑхайӗ-и? Паллах, ҫук. Ҫулла Кузнецовсем севок сухан йӑранӗ ҫинчен тухма пӗлмеҫҫӗ. Пӗрремӗш хут тап-таса ҫумланӑран кайран ытла нушаланмаҫҫӗ. Пахчара ыттисем пекех тӗрлӗ ҫимӗҫ, чечек ӳстереҫҫӗ. Картиш тулли – хур-кӑвакал, чӑх-чӗп, качака... Шура аппа кӳршӗри ватӑсене те пӑхать. Вӗсенчен пӗри 102 ҫула пурӑнса ҫитме пултарнӑ.

Ҫав тери уҫӑ кӑмӑллӑ, пурне те тараватвашават хӗрарӑма Турӑ та пулӑшса пырать пулас. Хальччен те хушӑран лотерея билечӗ туянкаланӑ-ха вӑл, пӗчӗк укҫа выляса та илнӗ. Анчах пӗлтӗр самаях ӑнӑҫнӑ ӑна. Ялти почтӑра туяннӑ виҫӗ лотерейӑран пӗри вылянине укҫине иличченех ӗненмен. Ҫӳл тӳперен йӑтӑнса аннӑ "парнепе" мӑнукне савӑнтарнӑ. Ӗҫчене ял кӑна мар, укҫа-тенкӗ те сават иккен.

**Ирина ПАВЛОВА.**

◆ ХИСЕП

# Вунӑ ача амӑшӗ

Совет тапхӑрӗнче ҫемьере вунӑ е ытларах ача ҫуратса ӳстернӗ тӗслӗх сахал мар. Акӑ, Элӗк районӗнчи Мӑн Ямашри Галина Афанасьевнӑпа Леонид Трофимович Трофимовсене шӑпах вӗсен йышне кӗртмелле. Шел, кил хуҫи ҫамрӑклах чире пула пурнӑҫран уйрӑлнӑ. Мӑшӑрӗ вара кӑҫал 80 ҫул тултарчӗ.

Трофимовсен 6 хӗрпе 4 ывӑл. Вӗсенчен пиллӗкӗшӗ ялта тӗпленнӗ, ыттисем ҫӗршывӑн тӗрлӗ кӗтесӗнче пурӑнаҫҫӗ. Пурте ҫемьеллӗ. Аслӑ хӗрӗ Рита 1957 ҫулта ҫуралнӑ, кӗҫӗнни Николай – 1971 ҫулта. Йышлӑ ача-пӑчана ҫитӗнтерме ҫӑмӑл пулман ашшӗ-амӑшне. Ку тӗлӗшпе вӗсене Леонид Трофимовичӑн амӑшӗ, Анна Ильинична, чылай пулӑшнӑ. Ывӑлӗпе кинӗ «Заря» колхозра вӑй хунӑ.

Ҫул хыҫҫӑн ҫул иртнӗ. Ачисем ҫине тӑнипе 1996 ҫулта Трофимовсем кирпӗч ҫурт лартнӑ. 2003 ҫулта вара унта пурӑнма куҫнӑ. Галина Афанасьевна халӗ кӗҫӗн ывӑлӗн ҫемйипе пурӑнать.

1973 ҫулта ӑна «Ача амӑшӗ героиня» орденпа чысланӑ. Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи умӗн ҫуралнӑскер кӑҫал «Вӑрҫӑ ачисем» медале тивӗҫрӗ. Ачисем амӑшне хисеплеҫҫӗ, юrataҫҫӗ. Вӑхӑт тупса ун патне васкаҫҫӗ. Ывӑлӗ Геннадий ӑна сума суса ҫакнашкал сӑвӑ йӗркисем шӑрҫаланӑ:

Эпир, вунӑ пӗртӑван,
Пухӑннӑ пурте паян.
Ӑшшӑн-ӑшшӑн калаҫма,
Аннене саламлама.

Ҫуратнӑшӑн ҫӗр ҫине,
Кӑларнӑшӑн ҫул ҫине,
Тавтапуҫ сана, анне,
Манас ҫуках ӗмӗрне.

Пурӑнар пӗрле, анне
Савӑнтарса пӗр-пӗрне.
Эсӗ – пирӗн чӗрере,
Лар паян – кӗрекере.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ. Элӗк районӗ.**






## Автоҫул ыйтӑвне тишкернӗ

Раҫҫей Президенчӗн федерацин Атӑлҫи округӗнчи полномочиллӗ представителӗ Михаил Бабич Самарта канашлу ирттернӗ. Унта пысӑк хӑвӑртлӑхлӑ «Европа – Анӑҫ Китай» автоҫул тӑвас ыйтӑва сӳтсе явнӑ. Ҫулӑн Китайри пайне асӑннӑ ҫӗршыв туса пӗтернӗ , Казахстан ҫитес ҫул вӗҫлет. Раҫҫей те ӗҫе пуҫӑнасшӑн. Мускавпа Питӗре, унтан тӗп хулапа Хусана, малалла Китаялла выртакан ҫула 2030 ҫулччен хута яма палӑртнӑ. Ҫак ҫул ҫинчи транспортӑн сехетри хӑвӑртлӑхӗ 110-130 километрпа танлашмалла. Вӑл Чӑваш Ен урлӑ та иртӗ. Ӑҫтарах – хальлӗхе татса паман. Вӑл М-7 автоҫултан, ял-хуларан инҫерех пулмалла.

## Туризма аталантарма

Чӑваш Республикин премьер-министрӗ Иван Моторин туризма аталантарассипе ӗҫлекен канаш ларӑвне ирттернӗ.

ЧР культура министрӗн ҫумӗ Иван Иванов Чӑваш Енри туризм рынокӗ лайӑх кӑтартусемпе палӑрнине асӑннӑ. Пӗлтӗрхипе танлаштарсан ҫитӗнӳ 25 процент пулнине каланӑ. Тӑвайӗнче, Елчӗкре, Йӗпреҫре туризм кирлӗ шайра аталаннине пӗлтернӗ.

Ӗҫлесе ҫитерейменни те пур. Чӑваш Енри 40 ытла турфирма, анчах та вӗсем Раҫҫейӗн пӗрлӗхлӗ базинче ҫук-мӗн. Иван Моторин Чӑваш Ен Культура тата Экономика министерствисене туристсен маршрутне йӗркене кӗртме хушнӑ.

## Сывлӑхпа спорт кунӗ

Шӑмӑршӑ районӗнче Сывлӑхпа спорт кунне ирттересси йӑлана кӗнӗ. Ҫак кун «Туслӑх» физкультурӑпа спорт комплексне ватти-вӗтти пухӑнать. Уява ял тӑрӑхӗсенче те йӗркелеҫҫӗ: спортзалсенче ачасемпе ҫамрӑксемсӗр пуҫне аслисем те сывлӑхӗсене ҫирӗплетеҫҫӗ. Шкул ачисем хушшинче «Атте, анне тата эпӗ – спорт ҫемйи», «Савӑнӑҫлӑ стартсем» ӑмӑртусем иртеҫҫӗ. Учительсемпе вӗренекенсен командисем волейболла выляс енӗпе тупӑшаҫҫӗ. Каҫхине спортзалсенче ял ҫамрӑкӗсемпе аслисем ӑмӑртаҫҫӗ.

«Туслӑха» ҫӳрекенсен йышӗ те ӳссех пырать: ытларах бассейна, тренажер залне кӑмӑлланҫҫӗ. Нумаях пулмасть иртнӗ Сывлӑхпа спорт кунне районӗпе 1 пин ытла ҫын хутшӑнни паллӑ. Ҫитес уява раштавӑн 19-мӗшӗнче йӗркелеме палӑртнӑ.

**Валентина МАКСИМОВА.**


# РЕКЛАМА, ПӖЛТЕРӲСЕМ

### *С У Т А Т Ӑ П / П Р О Д А Ю*

**2. АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 27 руб., 9х20х40 – 23 руб. Высокое кач-во. Доставка манипулятором. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3. АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4. Пластиковые ОКНА** и натяжные **ПОТОЛКИ.** Низкие цены. Замер. Д-ка. **Т. 8-927-668-43-82.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**11. Срубы на заказ.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**20. Кирпич:** красный, цветной, облиц. Скидки. Т. 89276678378.

**21. Керамблок, гравмассу.** Т.: 486307, 89176757528.

**22. Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**24. ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, копалки, окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89278533596.

**29. Косилки,** грабли, фрезы, погрузчики, опрыскиватели, **картофелесажалки,** доильные аппараты. **ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ! ДОСТАВКА!** Т.: 89379559802, 89373758095.

**30. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Недорого. Д-ка. Т. 89053465671.

**33. КИРПИЧ** М125, М150; **керамблок.** Доставка. Т. 89033220208.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**74. Керамблоки** вибропрессованные, пропаренные. Д-ка. Т. 89176676846.

**93. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**154. ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. **Пенсионерам скидки.** Т. 89176627164.

**251. МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ,** профнастил, металлосайдинг, пластиковые окна. Доставка, замер. **СТРОИТЕЛЬСТВО.** Т. 8-919-653-43-68.

**797.КВАРТИРЫ в Чебоксарах** от 1 млн. руб. Ипотека. Т. 8 (8352) 37-27-23, 8-927-667-01-19.

### *КУПЛЮ / ТУЯНАТӐП*

**28. Вӑкӑр, ӗне, тына,** сысна амисем. Т. 8-927-999-37-37.

**39. Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50. Коров.** Т. 8-927-850-85-64.

**799. Морковь, свеклу** красную, **лук** репчатый. Тел. 89656855578

### *ПУЛӐШУ / УСЛУГИ*

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 9.00 до 19 ч., сб., воскр. с 9.00 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 8(8352)552733.** *Лиц. ЛО 21-01-001 096 от 06.06.2014г. МЗСР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**36. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает многие жизненные проблемы.Т. 8-967-474-37-83.

**38. ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-967-471-50-70.

**77. НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** – за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152. Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

**269.** Профессиональное **утепление домов ЭКОВАТОЙ и ПЕНОИЗОЛОМ.** Гарантия на монтаж. Осенние скидки. Т. 89196691666.

**406. Строительные работы** – от фундамента до кровли. Недорого. Качественно. Т. 89196534368.

**617. Бурение колодцев, скважин.** Т.: 89674703824, 89279905481.

**664. Утепление ЭКОВАТОЙ** домов, стен, чердаков, полов, мансард. **Скидки.** Т. 8-917-662-71-64.

**750.** Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

### *ӖҪ / РАБОТА*

**54. МОНОЛИТЧИКИ в г. Йошкар-Ола.** Куб – 2500 руб. Жилье, питание. Т.: 89176737773, 89625997773.

**126.** В связи началом строительства нового объекта **требуются монолитчики, каменщики.** Тел. 8-925-002-22-38.


## ЧӐВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем ҫинче)

**Тунти кун, чӳк уйӑхӗн 30-мӗшӗ**

6.30-7.00, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 22.10-22.30 Тӑван юрӑ-кӗвӗ. (12+) 6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кӑмӑл. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 8.30-09.00 Ялтан яла. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Ҫӗр сум. (12+) 11.30-12.00 Атте пилӗ. (12+) 12.10-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Ялтан яла. (12+) 16.10-17.00 Тата мӗн кирлӗ пурнӑҫра? (12+)17.30-18.00 Чӗрӗлӗх ҫути. (12+) 18.30-19.00 Чӑваш халӑх йӑли-йӗрки. (12+) 19.30-20.00 Тӗплӗ калаҫу. (12+) 20.30-21.00 Концерт органной музыки. (12+) 21.30-22.00 Ҫемье ӑшши. (12+) 22.10-23.00 Янра, юрӑ. (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 10.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытлари кун, раштав уйӑхӗн 1-мӗшӗ**

6.10-6.30 Ирхи кӑмӑл. (12+) 6.30-7.00 Республика сасси. (12+) 7.10-7.00 Ирхи кӑмӑл. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 8.30-09.00 Чӑваш халӑх йӑли-йӗрки. (12+) 9.30-10.00 Дневник оперного фестиваля им. М. Д. Михайлова. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30, 14.10-14.30, 16.10-16.30, 19.10-19.30 Тӑван юрӑ-кӗвӗ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Ҫемье ӑшши. (12+) 12.10-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра, юрӑ! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалӑх урхамахӗ.(6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ҫӗр сум.(12+) 18.10-19.00 Тӑван ӑс-хакӑл. (12+) 19.10-20.00 Асӑмри юрӑсем.(12+) 20.10-21.00 Тата мӗн кирлӗ пурнӑҫра? (12+) 21.30-22.00 Республика сасси. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, раштав уйӑхӗн 2-мӗшӗ**

6.10-6.30 Ирхи кӑмӑл. (12+) 6.30-7.00 Республика сасси. (12+) 7.10-8.00 Ирхи кӑмӑл. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 8.30-9.00 Социальный вопрос. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-11.00 Тӑван ӑс-хакӑл. (12+)11.30-12.00 Ҫӗр сум. (12+) 12.05-13.30 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.10-15.00 Асӑмри юрӑсем. (12+) 15.30-16.00 Солдаты и дети Победы. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Литература ҫӳпҫинчен. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Тӗплӗ калаҫу. (12+) 20.30-21.00 Паллӑ ят. (12+) 21.10-22.00 Ҫиларман-шоу. (12+) 22.30-23.00 Республика сасси. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кӗҫнерни кун, раштав уйӑхӗн 3-мӗшӗ**

6.10-6.30 Тӑван юрӑ-кӗвӗ. (12+) 6.30-7.00 Республика сасси. (12+) 7.10-8.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 8.30-09.00 Республика сасси. (12+) 9.30-10.00 Тӗплӗ калаҫу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-12.00 Чӗнтӗрлӗ чаршав. (12+) 12.10-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.30-15.00 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тӑван юрӑ-кӗвӗ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Мӗншӗнкке. (6+) 18.30-19.00 Тӑван ӑс-хакӑл. (12+) 19.30-20.00 Атте пилӗ. (12+) 20.30-22.00 Ҫичӗ юрӑ. (12+) 22.30-23.00 Республика сасси. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, раштав уйӑхӗн 4-мӗшӗ**

6.10-6.30 Ирхи кӑмӑл. (12+) 6.30-7.00 Тӑван юрӑ-кӗвӗ. (12+) 7.10-8.00 Ирхи кӑмӑл. (12+) 8.10-8.30, 14.10-14.30, 18.10-18.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 8.30-9.00 Республика сасси. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Тӑван ӑс-хакӑл. (12+) 11.30-12.00 Пултарулӑх ҫулӗпе. (12+) 12.10-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.10-15.00 Асӑмри юрӑсем.(12+) 15.10-16.00 Пачӑшкӑ сӑмахӗ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-17.30 Тата мӗн кирлӗ пурнӑҫра? (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине.(12+) 20.10-24.00 Каҫхи микс. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шӑмат кун, раштав уйӑхӗн 5-мӗшӗ**

6.00-7.00 Чӗнтӗрлӗ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Неформат. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 8.10-9.00 Литература ҫӳпҫинчен. (12+) 9.30-10.00 Ялтан яла. (12+) 10.30-11.00 Старт.(12+) 11.30-12.00 Ачалӑх урхамахӗ. (6+) 12.00-12.10, 16.00-16.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Мӑшӑр ҫунат. (12+) 16.30-17.00 Символ веры. (12+)17.30-18.00 Шурӑмпуҫ. (12+) 18.30-19.00 Иксӗлми ҫӑлкуҫсем. (12+) 19.30-20.00 Уйӑхпи юмахӗсем. (6+) 20.05-24.00 Каҫхи микс. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарни кун, раштав уйӑхӗн 6-мӗшӗ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 10.05-10.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулӑх ҫулӗпе. (12+) 7.30-8.00 Символ веры. (12+) 8.05-8.30, 16.10-16.30 Тӑван юрӑ-кӗвӗ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Шурӑмпуҫ. (12+) 10.00-11.30 Ҫичӗ юрӑ. (12+) 11.30-12.00 Мӗншӗнкке. (6+) 12.05-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Голос Республики. (12+) 16.30-17.00 Старт. (12+) 17.10-18.00 Ҫиларман-шоу. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.00-20.00 Янра, юрӑ! (хит-парад) (12+) 20.05-24.00 Каҫхи микс. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10


РЕКЛАМА

**45. Лечение алкоголизма и табакокурения.** Т.: 8(8352)215345, 89199785855.
*Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

